# Паттăр ĕçĕ

Поэтăн пĕтĕм пурнăçĕ унăн пултарулăхĕнче курăнать. Тĕрлĕ поэтăн тĕрлĕ шăпа. Пĕри сахал пурăнса та нумай çырма ĕлкĕрет, тепри нумай пурăнса та нимĕнех туса ĕлкĕреймест. Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн пурнăçĕ вăрăмах пулмарĕ, çапах та вăл нумай çырса хăварма ĕлкĕрчĕ -вырăсла та, чăвашла та. Сăвăсемпе юрăсем, юмахсемпе поэмăсем, калавсемпе очерксем, «Аптраман тавраш» сăвăлла роман - çакă пурте Петĕр Хусанкайăн чăваш çырулăхĕнче тунă чаплă ĕçĕсем. Кунсăр пуçне, Хусанкай вырăс тата ытти нумай халăх поэчĕсеи сăввисене хамăр халăха тăван чĕлхепе вулаттарас тĕлĕшпе те пайтах ĕçлерĕ. В Шекспирăн «Ромеопа Джульетта» трагедийĕ, А. Пушкинăн «Евгений Онегин» сăвăлла романĕпе «Полтава» поэми, А. Грибоедювăн «Ăса пула инкек» комедийĕ, В. Маяковскин «Владимир Ильич Ленин» поэми, «Тăван сасăсем» - çĕнĕ вăхăтри тĕнче поэзийĕн паллă сăввисем - Хусанкайăн пуян еткерĕ.

Петĕр Хусанкай вилес умĕн темиçе çул малтан кăларнă кĕнекинче - вăл икĕ томпа тухнă, унта поэтăн паллă сăввисемпе поэмисем кĕнĕ - вăхăтăн-вăхăтăн тухса тăнă кĕнекесемпе савă ярăмĕсен ячĕсене асра тытса, хăйĕн пултарулăхне çапла йĕркепе кăтартнă: «Ирхи», «Савни», «Хура пĕркенчĕк», «Кăнтăр сăввисем», «Хамăр ялсем», «Сиктĕрме», «Аслă чĕре», «Пулчĕ вăрçă», «Тилли юррисем», «Кунçул тӳпинчен» сăвă ярăмĕсем; «Çирĕм улттă», «Паянхи поэма», «Магнитту», «Байрон», «Улмуççиллĕ Тĕрлемес», «Байрон», «Яманкас юмахĕ», «Шелепи шерепи», «Таня», «Çĕнтерӳ юрри», «Сăмах хăвачĕ», «Тури Вылта туй сикет», «Çуллахи талăк», «Çуралнă çĕршывра», «Горкăри çурт», «Пĕрремĕш çуркунне», «Владимир Маяковский», «Çӳлелле», «Çĕрте те çĕрместпĕр», «Сергей Есенин патĕнче» поэмăсем. «Аптраман тавраш» сăвăлла романа вăл уйрăм пичетлесе кăларнă. Кайран çырнă çĕнĕ

сăвăсене поэт «Хушка хумсем» кĕнекене кĕртнĕ. Кунта вăл сăвăсене çапла лартса тухнă: «Йыхравçă», «Хушка хумсем», «Кавказ сăввисем», «Румынири май», «Пăлхар ярăмĕнчен», «Инçе вĕçев», «Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!», «Юхма тăрăхĕнче», «Поэзи сиплĕ çилĕ». Хусанкайăн очеркĕсемпе калавĕсем икĕ кĕнекепе тухнă - «Асталăхпа чăнлăх» тата «Книга дружбы». Çакă пĕтĕмпе чăваш халăх поэчĕн пултарулăхĕ питĕ анлă та сарлака пулни çинчен калать, вăл тĕрлĕ жанрта ăста ĕçленине кăтартать. Сăмаха пуçласа, акă тата çакна калăпăр: чăваш поэчĕн пĕтĕм пултарулăхĕ тăван халăх пурнăçĕпе, совет халăх пурнăçĕпе çыхăннă. Тăван халăхăн кĕрешӳри паттăрлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ, унăн тавракурăм анлăшĕпе шухăш тарăнăшĕ, унăп сăпайлăхĕпе ырă кăмăлĕ - Петĕр Хусанкай поэзире хускатнă паллă темăсем. Унăн пĕтĕм пултарулăхĕ «Чăваш» сăвăри пысăк туйăма палăртса тăрать. Чăваш халăх поэчĕ унта акă епле мăнаçлă сăмах калать:

«Эп ватă çав тери! Истори шурăмпуçĕ // Кăвакарайнăччĕ - вăрантăм ыйхăран. // Кунçул ани çине уттартăм янкăр уçă // Пуш пĕлĕт айĕпе малтисемпе пĕр тан. // Тĕрен тивмен çĕре ман йывăç акапуçăм // Хуратрĕ çĕклесе пайтах асаппалан. // Кăкланчĕ ерипен пиншер çулхи кăлкан: // Кайран акакана - ĕç çăмăл кутăруçăн. // Ăçта çитмерĕм-ши? Асра яланлăх пур // Вут пек хĕртен хирсем, нихçан кайми кĕрт-юр, // Лĕп тинĕссен тĕпне анса мерчен кăлартăм... // Телейшĕн хушăнан мулпа илем çинче // Этемлĕх çӳпçинче - пĕлсе тăтăр тĕнче! - // Пурин тенкипелен пĕр хак çӳрет нухратăм»

* * *

Петр Петровпч Хусанкай - Петĕр Хусанкай - 1907 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă, ачаран тăлăх ӳснĕ: пĕчĕкле ашшĕсĕр тăрса юлнă та амăшĕпе кăна пурăннă. Ĕçчен те ăслă чăваш хĕрарăмĕ пулнă унăн амăшĕ. Вăл ăна ăспа та, ĕçпе те тăван

халăхшăн пурăнма хăнăхтарса пынă. «Анне» сăвăра поэт хăйшĕн такамран та хаклă çынна акă епле ăшшăн асăнать:

«Сĕтелĕм тĕлĕнче яланлăх юлтăн. // Пуçу тавра анатрилле сурпан. // Художника тав турăн та ыр сунтăн: // «Хам пек пуль, - терĕн, - ватă, - ватă, ав, куран...» // Суха касси пек тарăн пĕркеленчĕк, // Çат тытнă тутуна яланхи пек, // Ик куç харши хушши раснах йĕрленчĕ, - // Унта пайтах пытарăннă инкек».

Поэт çуралнă ял - Сиктĕрме. Вăл халĕ Тутар АССРĕнчи Элкел районне кĕрет. Сиктĕрме аслă çултан инçетре, хӳтĕ вырăнта ларнă. Ĕлĕк ку ял халăхĕ таçта тухса çӳреме пултарайман. Çавăнпа вăл кунта хăйне майлăн канăçлă пурăннă, чăваш йăлисене хытă упранă, юрра-ташша, юмах-сăмаха хаклама пĕлнĕ. Çакă вара пулас поэтшăн питĕ усăллă пулнă. Вăл тăван чĕлхене, тăван тавралăха ачаран юратса ӳçнĕ. Çак юратăвах çивĕч ăслă çамрăка тĕнче умне поэт пулса тухмалли çула тупма пулăшнă. Хăйĕн ачалăхĕ çинчен каласа панă май поэт тепĕр çынна питĕ ырăпа аса илетчĕ. Ку вăл Наталья Яковлевна Яковлева - чăваш халăхне çутта кăлараканĕн И. Я. Яковлевăн вĕренекенĕ. Н. Я. Яковлева шкул ачисене «Нарспи» поэмăна вуласа, чăваш юррисене юрласа панă, вырăс литературине лайăх вĕрентнĕ. «Чăваш литератури çулĕ çине тăма пире Наталья Яковлевна Яковлева нумай пулăшрĕ, - тет Хусанкай. - Вăл чăваш чĕлхине, чăваш литературине лайăх пĕлетчĕ. Хăй вырăсларан чăвашла куçаратчĕ. Короленко, Тургенев çырнисене тата ыттисене те чăвашла куçарса пире вуласа паратчĕ. Кайран хамăра вулаттаратчĕ, «Нарспине» эпир пăхмасăр вулаттăмăр. Пире литература çулĕ çине тăратакансенчен пĕри вăл Наталья Яковлевна Яковлева тесе шутлатăп эпĕ. Кашни чăваш шкулĕнчех çавăн пек хастарлă, хăй халăхне юратакан, тăван литературăна, тăван чĕлхене хисеплекен çынсем пулсассăн, кашни чăваш ялĕнченех пысăк çыравçăсем тухма тивĕçлĕ, тухмалла та. Литература интересĕ ачаран пуçланать. Çирĕммĕш

çулсенче эпир хамăр шкулта «Вĕренекенсен сасси» ятлă журнал кăлараттăмăр алăпа çырса. Çавăнтан пĕрремĕш утăмсем пуçланнă пирĕн. Эпĕ хам та çав журналтан пуçланă».

1923 çулта Хусанкай ялти шкултан вĕренсе тухать, тата вĕренме тесе, Хусана çул тытать. «Анне мана епле пулин те вĕрентесшĕнччĕ», - тенĕ поэт кайран. Хусанта чухне вăл Н. И. Полоруссов-Шелепи сăвăçпа питĕ çывăхланнă. Хусан хули Петĕре тăван çырулăха пĕтĕм чунĕпе парăнтарать, унăн поэт ячĕ таçта та саланать, халăха пăлхатать. Çавна курнипе ĕнтĕ Шелепи 1928 çултах «Хусанкай поэта» сăвăра çапла çырнă: «Сăн-сăпатна сăнаса пăхатăп та - // Пушкин сăнĕ пек туйăнать мана. // Тĕсӳ-питӳ салху, сăмаху япшар, // Шăнкăрчă сасси пек илтĕнет хăлхана. // Арăслан пекех малалла ыткăнтăн, // Пултарулăхна хытă шанатăн. // Хамăр çырулăх илемне курасшăн // Хĕрӳ вут çулăмĕ пек çунатăн».

1924 çулта Шупашкарта «Сунтал» тухма тытăннă. Унăн малтанхи кĕнекинче çамрăк сăвăçăн виçĕ сăвви çапăннă. Çакăнтан пуçланнă чăваш поэчĕн - Петĕр Хусанкайăн чăваш çырулăхĕнчи вăрăм çулĕ. Чăваш халăхĕн çĕнĕ сăвăçă çуралнă. Сăвăçă тени авалхи тĕрĕк сăмахĕ, вăл «сăмах ăстине» пĕлтерет. Чăн та. Петĕр Хусанкай çамрăклах чăн-чăн сăмах ăсти пулнине кăтартнă. Хусанкай - ăçтан тупнă вăл çак ята? Кун пирки поэт «Раççейĕм» сăвăра акă мĕн çырать: «Пур, тетчĕç, эп астăвасса, // Пĕр пĕчĕкçĕ вырăс ялĕ; // Унăн улпутне те асăнатчĕç, // Вăл пулнă имĕш Арăстух.., // Пуçтах чăваш, тĕнче ухтармăш, // Çитсе кĕрет те Хусана, // Вăрах тăрать-и вăл, сахал-и, Телейлĕ-и, телейсĕр-и - // Вăлтса илет çав пикене, // Çав Арăстух çыннин хĕрне, // Килет унпа чăваш ялне. // «Хусан çынни» те «хусансем» // Тее пуçлаççĕ хайхине. // Хушаматланнă та вара вăл // Çырма тапратнă вырăсла: // Казанковсен ратти пуçланнă, // Кайран вăл тулнă çур яла. // Эп, хамăр Çеçпĕл

калешле, // «Чăваш тĕнче çывхарнă чух» // Çав вырăсла хушамата Чăвашлатмашкăн шухăш тытрăм. // .»

Петĕр Хусанкай сăввисене чăваш çынни лайăх йышăннă, çакă çамрăк сăвăçа çĕнĕ япаласем çырма хавхалантарнă. Поэт паллă чăваш çыравçисемпе çывăх пулас, вĕсемпе алла-аллăн ĕçлес ĕмĕтпе Шупашкара куçать. «1925 çулта, - тенĕ поэт, - эпĕ Хусантан Канаша пытăм. Канашран Шупашкара çитиччен ик-виçĕ талăк сĕтĕрĕнтĕмĕр. Ун чухне чугун çул та, шоссе те çукчĕ. Вĕренчĕкле çыркаланă сăввăмсем пичетленсессĕнех, мана ятлăрах поэтсем асăрхарĕç... В. Алентей, С. Элкер, Хумма Çеменĕ - маншăн нихçан манми ятсем». Шупашкарта Хусанкай тĕрлĕ ĕçпе пурăнать: «Сунталта» çырать, куçарать. Тăван çĕршыва курас, социализм тăвакан халăх ĕçне пĕлес килнипе вăл Совет çĕршывĕ тăрăх çӳреме шухăш тытать. «Эпĕ 1926-1927 çулсенче, - тет вăл, - Совет Союзе тăрăх пуçласа çӳресе куртăм. Тĕрлĕ халăхсемпе паллашрăм. Ашхабадран Каспи тинĕсĕ урлă Баку хулине çитрĕм. Бакуран «Çирĕм улттă» поэмăпа хавхаланса таврăнтăм». Тăван çĕршыв тăрăх çӳрекен поэт пурнăçа тĕрлĕ енчен курнă. Çакă ăна тата та тăрăшма, ăсталанма пулăшнă, вĕренме-пĕлме хĕтĕртнĕ. 1927 çулта кĕркунне вăл Хусана каялла таврăннă, аслă шкула - Хĕвелтухăç халăхĕсен педагогика институтне кĕнĕ. «Унта, - аса илет поэт, - мана чăваш чĕлхи ăсти Н. И. Ашмарин профессор тăван чĕлхене ăнланма нумай пулăшрĕ. Чăвашсемпе вырăссем ĕмĕрех юнашар пурăннине асра тытса, вăл чăваш чĕлхин сас ĕнерĕвĕ те, сăвă-юрă виçи те малашне вырăс чĕлхинчи пекрех пулса пырассине асăрхаттарчĕ». Чăваш чĕлхи пуласлăхĕ Хусанкая хытă савăнтарнă, сăввисене çырма хавхалантарнă. 1928 çулта унăн «Уяртсан» ятлă сăвă кĕнеки тухать. Кунта поэтăн çавăн чухнехи лайăх сăввисем кĕнĕ, вĕсенче çамрăк çыннăн шухăш-кăмăлĕпе ĕмĕчĕсене питĕ аван уçса панă, халăх пурнăçĕнчи паллă ĕçсене те анлă сăнлама тăрăшнă.

1928 çулта Хусанта Владимир Маяковскипе тĕл пулни поэт пурнăçĕнче паллă кун пулса юлнă. Вырăс совет поэчĕ ăна хавхалантарса ярать, сăмах хăватне хытă туйтарать. Çавăнпа-тăр Хусанкай кайран В. Маяковский ятне çырнă сăвăра çапла каланă: «Нумай чĕлхеллĕ măн хорта // Эп те пĕр пĕчĕк сас пулсассăн, // Паян эп уççăн палăртап: // Вăл - Маяковский лартнă сассăм».

Сăмах май çакна калăпăр: Петĕр Хусанкайшăн вырăс поэзийĕ ялан ырă тĕслĕх пулнă. «Чăваш прозипе поэзийĕ, - тенĕ вăл, - реализмла вырăс литературин лайăх традицийĕсене кура аталаннă, унăн халăхлăхне асра усранă. Поэт майăн, эпĕ Хĕвелтухăçпа Хĕвеланăç поэзинче, Саадипе Омар Хаямран пуçласа Гетепе Байрон таран, хама килĕшекен япала нумай тупатăп, ăна юратса вулатăп, анчах вырăс поэчĕсене тата хытăрах юрататăп. Тăван халăх чунне, унăн ĕмĕтне Пушкинпа Лермонтов пек вăйлă уçса парăттăм, вырăс поэчĕ Есенин пек чăваш поэчĕ пулăттăм, Маяковский пек революцилле пафоспа гражданлăха тарăн лирикăпа çăмăллăн çыхăнтарса çырма вĕре-нĕттĕм. Çапла манăн ĕмĕтĕм».

1931 çулта Хусанкай Мускава куçать, «Коммунар» чăваш хаçатне ĕçе вырнаçать. Кунта ăна хаçатăн вырăна тухса çӳрекен корреспонденчĕ тăваççĕ. «Чăваш хресченĕ» хаçата та вăл сахал мар çырнă. Поэт çине çавăн чухне мĕнле пăхнине Хусанкай акă мĕнле сăнлать Манежная, 11. Никольская, 10. // Миçе виçсе тухнă-ши эп çак хушша? // Миçе километр е çухрăм эп тунă - // Юри, шӳтшĕнех, хисеплесчĕ хушса. // Манежная - вунпĕр, хваттер - утмăл пиллĕк. Никольская - вуннă, хваттер... чим, тăхта: // Манеж кассинче ман тăват хутлă килĕм, // Никольскинче - кам пĕлмест? - Центриздат. // Шăп ман портфель анлăш «Чăваш хресченĕ» - // Кӳрнеклĕ хаçат, тăпăл-тăпăл, таса. // Эп - ун сăвăçи. Наянрах-и, ĕçчен-и, - // Çыратăп суясăр, савса, хал парса».

Хаçат редакцийĕ хушнипе Хусанкай тĕрлĕ хулана çӳрет, çĕнĕ заводсем-фабрикăсем тунине курать. Совет халăхĕн хĕрӳ ĕçне сăнать вăл. Горький, Донбасс, Магнитогорск - çавăн чухне ăçта кăна пулман-тăр поэт. Совет çыннисен паттăр ĕçне, социализм çуртне купаланă çĕрте çынсен чунĕ - кăмăлĕ те, шухăшĕ те хăвăрт улшăнса пынине сăнласа, вăл «Магнитту» поэма çырать. Çĕнĕ саманан çĕнĕ çыннисем - çаксем кунта ăна çывăх сăнарсем.

Вăтăрмĕш çулсем Хусанкайшăн питĕ тухăçлă пулаççĕ. Чăвашла сăвă çырнă майăн вăл вырăсларан та чылай куçарать. Унччен М. Горькин «Этем çурални» тата «Çирĕм улттăпа пĕрре» куçарнă-мĕн, халĕ вара ăна поэзи палăкĕсем - А. Пушкинăн «Евгений Онегин» романĕпе В. Маяковскин «Владимир Ильич Ленин» поэми канăç памаççĕ. Куçару ĕçĕ поэт ăсталăхне хытă çĕклет. Çавăн çинчен акă мĕн каланă вăл: «Маяковскипе Пушкин сăввисене куçарнă чухне хăйĕн вăйне кăтартнă чĕлхе мана хытă хавхалантарчĕ, унăн пысăк пуласлăхне шантарчĕ». Куçару ĕçĕ чăваш поэчĕшĕн ӳлĕм тепĕр тĕп ĕç пулса тăрать. Кама кăна куçарман вăл. 1958 çулта чăваш поэзийĕ çинчен çырнă статьяра çакна вулатпăр: «Чăваш поэзийĕ, тахçанхи йăлине тытса пырса, çак хушăра пайтах çĕнĕ куçарупа та пуянланчĕ... Мĕнле халăхăн сасси, мĕнле çĕнĕ ят çук унта! Лермонтов, Шевченко, Байрон, Шелли, Гейне, Ботев, Франко, Абай Кунанбаев, Хетагуров, Акопян, Чаренц, Маяковекий, Тычина, Рыльский, Бажан, Тихонов, Сурков, Тодоров, Радевский, Лиляна Стефанова, Банов, Орлинов, Мария Бануш, Бенюк, Буков, Лупан, Арагон, Рагим, Рустам, Шираз, Саломея Нерис, Джалиль, Мударис, Шпорта, Нехода, Швец, Ющенко, Новицкий, Михалков тата ыттисем те...

Кунсăр пуçне эпир пĕрлештерсе кăларнă кĕнекесенче çак ятсене тупатпăр: Твардовский, Исаковский, Симонов. Джамбул, Леонидзе, Гришашвили, Купала, Бровка, Кулешов, Алимджан, Шейх-Заде, Вургун,

Рза, Тильвитис, Венцлова, Райнис, Судрабкалн, Токобаев, Лахути, Исаакян, Сильва Капутикян, Рачия Ованесян, Кербабаев, Нурбердыев, Смуул, Парве, Гуттари, Евгения Хямяляйнен, Се Ман Ир, Тувим, Адамец, Бехер, Вапцаров, Вазов, Хикмет, Гильен, Парнис, Элюар, Арконада, Сабилла Алерамо, Неру-да, Амаду, Линдсей, Чаттопадхайя тата ыттисем те». Калас пулать, вĕсем нумайăшĕ - Петĕр Хусанкай куçарăвĕсем.

1934 çулта Хусанкай пуçĕпех литература ĕçне куçать. Çакă уншăн чи пысăк ĕç пулса тăрать. Поэт сăввисемпе поэмисем, куçарăвĕсем тĕрлĕ хаçатра, тĕрлĕ журналта вырăсла та, чăвашла та тăтăш çапăнаççĕ. 1934-1935 çулсенче Хусанкай «Сулмак» ятлă икĕ сăвă кĕнеки кăларать. Çавăн чухне вăл тата тепĕр ĕçе хытă иленет: вăл чăваш поэчĕсен сăввисене вырăс чĕлхине куçарса пичетлеме пуçлать. Вăл тăрăшнипе К. Ивановăн, Н. Васильев-Шупуççыннин, Н. Ваçанккан, С. Элкерăн, Ухсай Яккăвĕн тата ытти нумай чăваш поэчĕсен сăввисем вырăсра паллă пулаççĕ. Хусанкайăн куçару ĕçĕ çинчен каланă чухне уйрăмах çакна палăртмалла: вăл «Нарспи» поэмăна вырăсла ăста куçарчĕ, ăна тĕнчипе саланма пулăшрĕ. Çеçпĕл Мишши ятне нумай çĕре çитерчĕ.

1934 çулта Хусанкай совет писателĕсен I съездĕнче пулать, Максим Горькие тăнлать, паллă совет поэчĕсемпе паллашать. Аслă вырăс писателĕ Совет Союзĕнчи нумай нациллĕ совет литературин ӳсĕмĕсем çинчен каланă чухне чăваша тăтăш асăннисем ăна питĕ пăлхатаççĕ, тăван литературăра хавхаланарах ĕçлеме çунат хушаççĕ. Класс кĕрешĕвĕнче тивĕçлĕ вырăнта пуласшăн вăл.

«Эп пĕлетĕп: халь сывлăш та класлă, // Коммунизмла çутă пуласлăх. // Сывлăшра, тинĕсре, çĕр çинчех-и, - // Аслă класăн пĕр аслă ĕçне // Тума пуçланă эпĕр. Инçе-ха // Тĕнчипех çитесси ун вĕçне. // Эп çĕр çул пурăнмашкăн хатĕр // Ĕçлесе, кĕрешсе, юратса… » Анчах совет халăхĕн 30-мĕш çулсем вĕçĕнчи йывăр шăпи Хусанкая та пырса тивет. 1938

çулта ăна буржуалла национализмăн çĕрĕк шухăшĕсене сарать тесе айăплама тытăнаççĕ, тĕрмене хупса хураççĕ. Поэтшăн йывăр кунсем çулталăк çурă ытла тăсăлнă. «Мана ырра шанми туни те пулчĕ...» - тенĕ поэт кайран. Йывăр вăхăта вăл çирĕп тӳссе ирттерет, хăйне варалама памасть. 1939 çулта халăх сучĕ ăна, айăпĕ çуккине кура, тӳрре кăларать. Хусанкай каллех литература ĕçне тытăнать.

Тăван çĕршыв аслă вăрçин çулĕсенче Хусанкай çарта пулать. Дон шывĕ çинче, Сталинград патĕнче, Брянск фронтĕнче, Украина хирĕнче çапăçать, Польшăна çитет. 1944 çулта ăна йывăр амантаççĕ. Вăрçări паттăрлăхшăн Хусанкай «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа темиçе медале тивĕçлĕ пулать. Вăрçăра поэт мĕнле çын пулнине унăн Сталинград патĕнчи юлташĕ çапла каласа парать: «1942 çулхи сентябрь варринче пире Сталинград çывăхне илсе пычĕç. Дивизи умĕнче йывăр та ответлă ĕç тăратчĕ. Эпир тӳрех çапăçăва кĕмеллеччĕ, Сталинград хулине хӳтĕлекен çарсене пулăшмаллаччĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ дивизи хаçатне чăваш поэчĕ Петĕр Хусанкай пырса çитрĕ. Вăл çийĕнчех çапăçăва коммунист пулса кайма шутланине пĕлтерчĕ. Эпĕ часах Хусанкайпа тĕл пултăм. Ман умра вăтам пӳллĕ, яштака кĕлеткеллĕ салтак тăрать. Хăйне сăпайлă тытать, вăтанчăк та теме юрать, сăмаха ытлашши вакламасть, шухăша уçăмлă та татăклă калать.

Çапăçу вăхăтĕнче Хусанкай хăйне питĕ лайах кăтартрĕ. Кĕске вăхăтрах дивизири кашни полка çитсе курчĕ, нимрен те хăраса тăмастчĕ. Часах ăна партие илчĕç. Çакă ăна питĕ савăнтарчĕ: «Сталинградшăн çапăçнă чухне коммунист пулма тӳрĕ килнĕшĕн хама телейлĕ çын тетĕп. Çырас килет, ĕçлес килет. Фронтра чухне, уйрăмах Сталинградри çапăçу çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, хамăр халăхăн вăрçăри паттăрлăхне совет литературинче тĕрĕс ӳкерсе кăтартма нумай тăрăшма кирлине нихçанхинчен лайăх ăнлантăм. Вăрçă пире - фронтри писательсемпе поэтсене - пысăк произведенисем çырма хушать. Фронт тата маншăн акă

мĕнпе паллă пулчĕ: эпĕ совет çыннин пуян чунне курма пултартăм, çарти çынсен çирĕп юлташлăхне чунпа туйса илтĕм, çынсем пĕрне-пери мĕне кура хакланине аван куртăм. Унччен эпĕ çакна чĕрепе кăна сиссе тăраттăм. Маншăн, ĕлĕк чухне вăрçă ĕçне нимĕн чухлĕ те ăнланман çыншăн, вăрçă теми çывăх та хаклă пулса тăчĕ», - терĕ вăл. «Чăн та, çакă пĕтĕм тĕрĕс сăмах. Вăрçă çулĕсем Хусанкай сăввисене çĕнĕ сăн параççĕ. Вăл «Таня» поэма çырать, «Аптраман тавраш» романа пуçăнать. «Аптраман тавраш» ята тупсан хăраса ўкрĕм, - тенĕ вăл. - Вăл никам асне те ан килтĕрччĕ терĕм. Вăл ятра мана чăвашăн пĕтĕм кăмăлĕ курăнчĕ. Вара васкаса кĕнеке çырма пуçларăм. Уйрăм сыпăкĕсене вăрçă çулĕсенче кăларса та ĕлкĕртĕм».

Совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвне Хусанкай «Çĕнтерў юррипех кĕтсе илнĕ. Вăрçă хыççăн унăн пултарулăхĕнче çĕнĕ паллă тапхăр пуçланать. С. Элкерпе, Я. Ухсайпа, С. Шавлипе, Уйăп Мишшипе, А. Алкапа, Митта Ваçлейĕпе тупăшса тенĕ пек ĕçлесе, çулсерен пысăк кĕнекесем кăларать вăл. Вăрçă хыççăн унăн сăввисемпе поэмисене темиçе хут та вырăсла куçарса кăлараççĕ. 1950 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Петĕр Хусанкая, унăн чăваш поэзинчи ĕçне пысăк хисепе хурса, халăх поэчĕн ятне парать. Хусанкай обществăпа литературăри паллă ĕçĕсене сума суса, Совет правительстви ăна икĕ хутчен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Тăван халăх П. П. Хусанкая Чăваш АССР тата РСФСР Верохвнăй Совечĕсен депутатне суйланă. 1967 çулта Хусанкай Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисеппленекен государство премине илнĕ, 1969 çулта ăна ВЛКСМ чăваш обкомĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисеппленекен премине панă.

Петĕр Хусанкай тата нумай сăвă çырма, халăхшăн ĕçлеме пултарнă. Анчах йывăр чир унăн пурнăçне 1970 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче вăхăтсăр татрĕ. Унăн ячĕ тăван халăх асĕнче ĕмĕре юлчĕ.

*   *   *

Литература ĕçне Петĕр Хусанкай питĕ çамрăкла тытăннă. Хăй каланă тăрăх, сăвă çырма вăл вуникĕ-вунвиçĕ çулта пуçланă. Амăш юррисем, К. В. Ивановăн «Нарспи» поэми ăна чăваш чĕлхине илентернĕ. «Анне мана пĕрре çапла каларĕ, - асăнатчĕ Хусанкай: - «Эсĕ çуралнă кунах манăн юрра илтнĕ-тĕр, акă халĕ манпа тупăшса пăхасшăн, курăнать». Тăван чĕлхен вăйĕпе илемне, - тесе çырать Хусанкай, - чи малтан мана «Нарспи» туйтарчĕ. Ун чухне ăна кам çырнине те пĕлмен эпĕ. Вуласса пĕчĕклех вуласа тухсаттăм. Пĕрре аттепе анне кӳршĕ яла туя кайнă та, пирĕн пата хĕрсем улаха юлнă. Ак хайхисем Сетнерпе Нарспи валак патĕнче тĕл пулни çинчен юрла пуçларĕç. Кĕввине астумастăп ĕнтĕ. Анчах Иванов сăмахĕсене улăштаркаланă пулмалла çав хĕрсем. «Шăхра-шăхра шăварать урхамах пек лашине» тенине пит аван астăватăп! Хĕрсем çывăрма выртсан, эпĕ ăнсăртран хурăнташ хĕрĕн пуçелĕкĕ айĕнче пĕр кĕнеке кĕтесси куртăм. Систермесĕр туртса кăлартăм та. пурте лăплансан, вула пуçларăм. Вăл Чĕмпĕрте 1908 çулта тухнă «Чăваш юмахĕсемпе халапĕсем» пулнă-мĕн. «Нарспи» тĕлне çитсен, эпĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Ун чухне хам пĕр çиччĕре-саккăрта çеç пулнă пулас. «Нарспи» поэмăна эпĕ çуралнă çул вунçиччĕри çамрăк çырнă, вăл мана халĕ те тĕлĕнтерсе тăрать, хытă шухăшлаттарать. Тĕнче поэзинче эпĕ çавăн пек урăх тĕслĕх курмастăп: çапла çамрăк тăван халăх чунне питĕ тĕрĕс те лайăх епле уçса панă-ши, мĕн тери тарăн та вăйлă сăнарсем тунă вăл. Пуян та хитре «Нарспи» поэма. К. Иванов унта çынна тискер кайăк чунлă тăвакан «укçа тĕнчине» пĕтĕм курайманлăхпа питленĕ, тăван халăх пусмăртан хăтăласшăн ĕмĕр çунниие кăтартнă. «Нарспи» - çынна, унăн вайне мухтакан, халăха чĕререн юратса хисеплеме чĕнекен, чăваш халăхĕн иртнĕ саманари пурнăçне тарăн çутатса паракан поэма. «Çакă çутă тĕнчере // Вăйли çук та этемрен. // Шывсем çинче, çĕр çинче // Хуçа пулса вăл тăрать. // Анчах

вăйлă этем те // Хăй тĕнчине пăхăнать. // Укçапала эрехех // Çынна ăсран кăларать».

Сухапуçпе, сӳрепе çĕр ĕçлесе ӳснĕ кăвар чĕреллĕ чăваш çамрăкне, паллах, ку йĕркесем тӳррĕн пырса тивнĕ. Хăйĕн вăйне шанма, телейне сăмах ăсти ĕçĕнче шырама каланă-тăр ăна К. Ивановăн хăватлă сăмахĕсем. Çавăнпа пĕрлех «Нарспи» поэма Хусанкая пурнăç çине савăк куçпа пăхма, çав пурнăçа çынсен кăмăлне тивĕçлĕрех тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарнă. Ахальтен мар Хусанкай, хăй каланă пек «ирхи» сăвăсенчен тытăнсах, çын чунĕн илемне уçса пама тăрăшнă. Таса юрату, çирĕп туслăх - çамрăк Хусанкай сăввисенчи тĕп кĕвĕ. «Савни», «Хура пĕркенчĕк», «Кăнтăр сăввисем» ярăмсем çакна ытла та аван кăтартаççĕ.

Поэт ăшă чунпа çырнă сăвăсене теприсем тиркеме те пăхнă-мĕн. Поэт хăйĕн туйăмĕ çинчен кăна çырать тесе, вулакансен пуçĕсене самаях минретнĕ хытă чунсемпе пушă пуçсем. Халĕ ĕнтĕ паллă: çамрăк Хусанкай сăввисем тĕнче поэзине тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсем вулакан чунне те хускатма пултарчĕç. Юратупа туслăх çинчен çырассине Хусанкай кайран та манăçа хăвармасть. Кунта поэтăн нумай сăввисене илсе кăтартма пулĕччĕ: «Савни», «Хура пĕркенчĕк», «Кăнтăр кĕввисем». Юратупа туслăх çинчен, этем телейĕ çинчен каярахпа çырнă вăйлă сăвăсен шутне «Тики-тики», «Çуллахи каç» («Шур пĕлĕтсем шăваççĕ анăça»), «Сăпка юрри» («Сĕм вăрманĕ каш та каш»), «Тăва-тă хурăн», «Кĕрхи кĕреке», «Вак хĕрринче», «Хĕрарăм тантăша» («Сиктĕрме» сăвă ярăмĕнчен), «Амиç», «Эп Форнарина теттĕмччĕ ăна», «Митта патĕнче».

Хусанкай пултарулăхне социалла тема та питĕ хăвăрт кĕнĕ, вăл çултан çула сарăлса тĕрекленнĕ. Чи малтан пичетленнĕ «Уй-хир юрри» сăвăрах çакă лайăх палăрать. Вырăс поэчĕн кĕввипе çырнă çак сăвăра поэт çамрăк çыннăн тулли кăмăлне уçса панă. Ĕçре çыннăн савăнăçĕ, ĕçре çыннăн телейĕ.

«Эх, мĕскершĕн, эх, мĕскершĕн // Эп ларатăп пăчăхса? // Уттарам-ха, чуптарам-ха, // Çаврăнам-ха хир пăхса. // Эх, вырар-и, эх, юрлар-и, // Эпир килнĕ кĕрĕшсе, // Хăмăш хăмăл - вырма çăмăл, // Ыраш пулнă сĕрĕшсе».

Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ, вĕсен вăй-халĕ, паттăр ĕçĕ-хĕлĕ - пурне те Хусанкай поэт чунĕпе ăнланать. Лайăха мухтать, усала сивлет. Совет çыннисен ĕçри хастарлăхĕ унăн чĕринче маттур кĕвĕ, марш çемми çуратать: «Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и, // Мĕн пурĕ пĕр çăлтăр айне! // Пĕтĕм Союзăмăр - ударник, // Утать социализм патне».

Поэт пултарулăхĕ çĕнĕрен çĕнĕ кĕвĕсемпе пуянланса пырать. Япони коммунисчĕ Сен Катаяма вилсен, Хусанкай интернационаллă пысăк туйăмпа сăвă çырать:

«Сайралать пирĕн ватă гварди. // Хурала, комсомолецсем! // Яш чĕре варрине шĕл-кăвар чĕрт, // Хурлăхпа пуçна ан пĕксем. // Ĕнер çеç ман Октябрĕм харсăр // Юрласа янăрарĕ. Паян - // Тем чухлех, куççулне пытармасăр, // Ветеран тупăкне пуç таян. // Анчах эп ĕненеп: ватăлтармăн // Коммунизм ĕçне эс, ĕнер // Юрăпа утса, халь ветеранăн // Сив ўтне салютлан пионер!»

1935 çулта Испанире Федерико Гарсиа Лоркăна, паллă поэта, фашистсем тискеррĕн вĕлереççĕ. Çакă чăваш поэчĕн чĕрине хытă пырса тивнĕ, хуйхă сăвви çуратнă; унта поэт халăх ĕçĕшĕн пуç хунă паттăрсене этемлĕх манас çуккине шантарать:

«Эп сана нихçан та курман, // Итлемен эпĕ сан юрруна та. // Çав-çавах сан сăну халь пур ман, // Эсĕ ман чĕрере пурăнатăн. // Чĕрĕ эс! Тыткăнланнă Гренада // Çапса ватĕ тăшман сăнчăрне. // Ху çинчен те, хăвăн юрруна та // Савса юрлĕç вара ĕмĕрне».

Хаяр та Хусанкай, çепĕç те. Çак кĕвĕсем унăн сăввисенче яланах вăйланса пыраççĕ. Поэт хаярлăхĕ çинчен калană май унăн 30-мĕш çулсенче çырнă икĕ сăввине - «Эпир ăнланатпăр» тата «Итле, Германи»

публицистикăлла япаласене - асăнасшăн. Вĕсенче поэт çĕрĕшсе пыракан капитализма питлет, социализм самани пысăк халăхсене те, вакрах халăхсене те экономикăпа культурăна аталантарма лайăх майсем туса панине пурнăçри чăн-чăн ĕçсем урлă кăтартса парать.

«Эпир ăнланатпăр» сăвă акă мĕнле сăлтава пула çуралнă. 1932 çулта Францири буржуалла хаçат совет халăхĕсенчен мăшкăлласа çапла çырнă: «Кăркăссем, якутсем, чăнашсем Ленин çырниие мĕн ăнланаççĕ-ши?» - тенĕ. Çак элеке сирсе, чăваш поэчĕ капитализм тĕнчин усал йăлисене питлет, Ленин вĕрентĕвĕпе хавхаланса, совет çынни коммунизм çуртне хăпартнине кăтартса, буржуалла сутăнчăк журналисткăн суя сăмахне тăрă шыв çине кăларать: «Ăнланатпăр çеç мар, Мадам Вайс: // Эпир - Ленинпа авăрланнăскерсем, // Эпир - паянхи чăвашсем, якутсем... // Эпир тĕрлĕ саслă пĕр пĕтĕм симфони пек // Ĕçпе кĕрешӳ хумĕнче чун чӳхетпĕр. // Çурт хамăрăн пирĕн, ун чапĕшĕн кунĕпе // Тăм саппуна пăрахман ку чух эпĕр. // Пире ăнланаççĕ. Ĕçри пирĕн юрă // Каять çĕнтерӳллĕн йĕри-тавралла».

1930 çулта фашизм енне сулăна пуçланă буржуалла Германин Мускаври посольстви чăвашпа монгола вăрçа хирĕç кĕрешекенсен нимĕç çĕрĕнче ирттерме йышăннă конференцине кайма виза хучĕ памасăр тăнă. Чăвашпа монгол чыспе сыхлать Хусанкай «Итле, Германи» сăвăра, вĕсене мăшкăллама тăнине хирĕç калать вăл: «Пĕлтер мана: илемсĕр туйăнчим // Чăвашпала монголăн хĕрĕ-ывăлĕ? // Çак çылăха асилĕн эс, Германи, // Каçару çук сана, каçару çук!»

Капитализм тĕнчине питлекен, социализмла çĕршывсем хушшинчи çыхăнусене, вĕсен ырлăхне сăнлакан сăвăсем Хусанкай пултарулăхĕнче питĕ йышлă. Хусанкай тĕрлĕ çĕршывсене кайса çӳренĕ, вăл Софийăра, Прагăра, Белградра, Будапештра, Бухарестра, Гаванăра пулнă, Лондонпа Париж çийĕн вĕçсе иртнĕ. Вăл уйрăмах социализм çĕршывĕсене кайса курма юратнă, унта ăна тăвана йышăннă пекех

хисеплесе йышăннă. Çакă, паллах, поэт пултарулăхĕнчи туслăхпа тăванлăх туйăмне вăйлатма пулăшнă, патриотизмпа интернационализм сăввисен шутне ӳстернĕ. Кĕçех унăн «Румынири май» (1959-1963), «Пăлхар ярăмĕ» (1960-1963), Кубăран таврăнсан çырнă «Инçе веçев» (1963-1964) сăвă ярăмĕсем тухаççĕ. Совет элчи, чăваш элчи пулса кайнă Хусанкай социализм çулĕпе маттур утакан тăванла халăхсен çĕрне. Поэт унта совет культурин ялавне çирĕп тытса çӳренĕ, социализм çĕнĕ пурнăç тунине курса хавхаланнă. Акă мĕнле янăравлă сăвăпа пуçланать унăн «Инçе вĕçевĕ»:

«Куба! Аçтан сăмах тупăп // Санăн ятна мухтама? // Юррăн кĕрен чунăма, // Эсĕ - ман савăнăç, Куба! // Куба! Хапху санăн хупă, // Çичĕ ютла сĕкĕнсен. // Çур сăмахран та сисен // Çын кăмăлне, сыхă Куба! // Куба! Тăшманшăн эс - тупăк. // Туслăх-тăванлăх тĕнчи // Пирĕн Чăваш çĕрĕнчи // Паттăр юмах пек вăл, Куба! // Куба! Эп ватăлăп, супăп, - // Сан сухалу асăмра // Юлĕ хура та çăра: // Эсĕ - ман çамрăклăх, Куба!»

«Инçе вĕçев» хăйне майлă сăвă ярăмĕ те, поэма та. Ăна вырăс совет поэчĕн А. Твардовскин «За далью - даль» поэмипе кăна танлаштарма пулать. Поэт таçта кайсан та тăван çĕрне асра усрать, унăн тăван çĕрĕ Совет çĕрĕнчине ялан пĕлсе тăрать, Совет çĕрĕ тĕнче тĕрекĕ иккенне пĕрре те манмасть:

«Эп Совет ятпа çĕклентĕм, // Çав сăмахăн ăшшине // Ăшăма илсе çĕнелтĕм // Кивелмеслĕх малашне. // Коммунист ятпа çитертĕм // Архимедăн ĕмĕтне: // Çĕре глобус пек тĕпчерĕм, // Çаврăрса енчен енне. // Эп чăваш ятпа йĕрлерĕм // Тӳпери çăлтăрсене: // Николаевпа çӳрерĕм, // Сăввăн кĕтĕм чĕрине». Инçе те çӳле вĕçет совет халăхĕ, инçе те çӳле вĕçет социализм çынни. Çапла шутлать чăваш поэчĕ, çапла калать совет сăвăçи - сăмах ăсти:

« ...Мухтав: каллех Раççей тапратрĕ // Тĕнчешĕн çĕнĕ самана. // Çĕнтерчĕ ирĕк ăс хастарĕ // Пур асапа, пур нушана... // Телей ыйтмастăп

хамшăн уйрăм: // Пур халăхпа çĕклен çурта // Эп те пĕр пĕрене, тен, хутăм, // Телейĕм пултăр çавăнта. // Ак вымпел çӳлелле çул уçрĕ. // Унта ман ĕç те пур. Пĕлем. // Çап-çутă коммунизм çурĕ // Çывхарнине туятăп эп».

Çакăн пек сăмахсемпе кĕтсе илнĕ Хусанкай космос эрине. Ăна вăл «Çӳлелле» (1962) поэма халалланă. Тăван халăха чунтан юратнă, унăн сăпайлăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе савăнса мухтаннă поэт, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетессишĕн чунтан тăрăшнă. Акă Хусанкай совет поэчĕсене хисеплесе çырнă паллă сăввисем: «Максим Горькие», «Владимир Маяковский», «Сергей Есенин патĕнче», Л. Соболева халалланă «Ту качаки путекĕ», Н. Тихонов çинчен çырнă «Альп , туйиллĕ çын», «Павло Тычинăна», «Кайсын Кулиев патĕнче», «Назăм Хикмета», «Муса Джалиле», «Максим Рыльские», «Ян Судрабкална», Р. Гамзатова сума суса çырнă «Сывăш курки», «Семен Данилова» тата ытти те. Хусанкай Тăван çĕршывăн таçти кĕтессине те çитсе сасă панă. «Çӳрес килет, курас килет. Килте ларнипе пурнăçа пĕлме йывăр», - тетчĕ вăл. Антти Тимонен, «калама çук капăр каçлă Карели» поэчĕ, Хусанкай çинчен, ăна кăмăлласа, çапла çырнă: «Сăнран лăпкă та шӳхăшлă Петĕр Хусанкай - питĕ канăçсăр çын. Вăл çур тĕнче тавра çаврăннă: çуран утнă, тĕвепе, ашакпа, автомашинăпа, поездпа çӳренĕ, самолетпа вĕçнĕ. Вăл Вăтам Азие, Кавказа, Украинăна, Латвие, Польшăна, Румыние, Чехословакие, Кубăна, Болгарие кайса çӳренĕ... Ăçта кăна çитмен-тĕр вăл, мĕнле çĕршыв çинчен сăвă хывман-тăр». Хăй вăхăтĕнчи нумай поэтсемпе туслă пурăннă, вĕсен литературăри пултарулăхне пысăка хурса хакланă вăхăтрах Хусанкай тĕнче поэзийĕнчи паллă сăвăçсене те асрах тытнă. Пушкин унăн юратнă поэчĕ пулнă. «В отчизне ко всему причастен, // Храня ее красу и честь, // Я думаю: какое счастье, // Что у России Пушкин есть», - тенĕ вăл «Пушкин» сăвăра. «Овидий Назона», «Поэт суранĕ», «Федерико Гарсиа Лорка», «Адам Мицкевич», «Николай

Вапцаров», «Тукай хурăнĕ», «Ламара», «Блага Дмитриевăна» - çак сăвăсен ячĕсемех поэт тĕнче культурине, ăна аталантаракансене пысăк хисепе хунине кăтартаççĕ. Çакна каланă май икĕ сăвва уйрăмах палăртас килет: икĕ улăп çинчен вĕсем - Владимир Маяковскипе Назым Хикмет çинчен.

Икĕ улăп - Маяковский тата Хикмет, вырăспа тĕрĕк халăхĕн паллă поэчĕсем, хамăр харсăр саманан харсăр юрăçисем. Вĕсем çĕре кĕнĕ поэтсем, хăйсен çут тĕнчери парăмне татса кайнă çынсем. Чăваш халăх поэчĕ Хусанкай Владимир Маяковскипе Назым Хикмета асăнса çырнă сăвăсене вулатăн та çакна тата та хытă туйса илетĕн. Икĕ улăп - икĕ шăпа...

«Вăтăр пилĕк çултан» (1963), «Назăм Хикмета» (1963) - çак сăвăсем иккĕшĕ те асаилӳпе çыхăннă. Хусанкайăн Маяковскипе те, Хикметпа та куçа-куçăн курса калаçма тӳрĕ килнĕ. Çавăнпа-тăр сăвăсене вуланă чухне вăхăтсăр çĕре кĕнĕ поэтсем пирĕн ума ĕмĕр манмалла мар чĕррĕн тухса тăраççĕ. П. Хусанкай вĕсем çинчен ăшшăн та çепĕççĕн каласа парать.

В. Маяковские халалланă сăвва уйрăмах пысăк туйăмпа çырнă. П. Хусанкай кунта сăмахпа тĕлĕнмелле ăста усă курать - çакна вăл паллă поэтран хăйĕнчен вĕренсе юлнă. «В. Маяковский мана поэзи çнне çĕкĕлле пăхма вĕрентрĕ», - тесе  каласа паратчĕ поэт. Акă сăвă йĕркисем:

«Çитмĕл çитрĕ. Çуррине кăна // Пурăнма пултартăн чĕрĕ халлĕн, // Тен, çавна сиссех, пайтах хăвна // Çĕр тавра кумтартăн каллĕ-маллĕ. // Прага та Берлин, Нью-Йорк, Париж... // Пĕр-пĕр Монте-Карло та Гавана... // Кур этемлĕхе, яра пар - иш, // Вĕç, е автопа сана аван-и... // Сăвăçăн курас-илтес пулать, // Саманамăр кĕнеки пит аслă. // Эсĕ ăна уçса вула-вула // Пĕр çиллес çӳрерĕн, пĕр хаваслă». Чăн та, В. Маяковский хăйĕн çур ĕмĕрне çурри çул çӳресе ирттернĕ. Çулçӳрев ăна

сывлăш пек кирлĕ пулнă. Çул çӳресе, вăл пурнăçа тĕпченĕ, халăха сăнанă. Çавăнпа тасҫта та ҫитсе курма тăрăшна. 1925 ҫулхине Маяковский Америкăна кайса килет, Мексикăра пулать, çула май Франципе Испание кĕрсе тухать. Çавăн хыççăн вăл «Мое открытие Америки» очеркпа ютри тĕрлĕ халăхсен пурнăçне кăтартакан сăвăсен ярăмне çырать («Париж». «Стихи об Америке»). Хамăр çĕршывра та В. Маяковский çитсе курман кĕтес хăвармасть. Сăмахран, 1927 çулта кăна вăл Новочеркасскра, Винницăра, Харьковра, Ростовра, Тифлисра (Тбилисире), Хусанта, Свердловскра, Тулăра, Ленинградра, Мускаврa, Воронежра, Ялтăра, Евпаторире, Вяткăра, Ĕпхӳре тата ытти нумай-нумай çĕрте пулса курать. Çавăн чухне унăн «Хорошо» ятлă поэми (1927) çуралать. Ялан халăх хушшинче пулнипе вăл пурнăçа тĕрĕс те витĕмлĕ сăнласа кăтартма пултарнă. «Саманамăр кĕнеки пит аслă», - тенĕ П. Хусанкай. Çавна лайăх вуласа пĕлесшĕн пулнă та ĕнтĕ çулçӳревçĕ В. Маяковский. Чăваш поэчĕ ăна питĕ лайăх ăнланать. Çӳлте асăннă сăввăн юлашки икĕ йĕрки çинче чарăнса тăрас килет манăн: // Эс ăна уçса вула-вула // Пĕр çиллес çӳрерĕн, пĕр хаваслă».

Çак сăвă йĕркисем В. Маяковский пултарулăхĕн питĕ вăйлă енне ăнланса илме пулăшаççĕ. П. Хусанкай вара çавна, В. Маяковский сăввисев çилĕлĕхĕпе хаваслăхне, нимрен те лайăх туйса илнĕ.

Калас пулать, ют çĕршывсенче çӳренĕ чухне В. Маяковский чĕринче хаваслăхран ытларах çилĕ пулнă-тăр. Выçăллă-тутăллă пурнăçа тӳсеймесĕр Бруклин кĕперĕ (Америкăри хитре чаплă кĕпер) çинчен шыва сиксе вилекен ĕççĕр юлнă рабочисене, татăк çăкăршăн кунне-çĕрне пăхмасăр урамра атă-пушмак тасатса ларакан хура ачана, тунсăх куçлă пĕчĕк негра курсан, Маяковский савăк пулнă теейменĕпĕр. Анчах СССРтан «çичĕ çула кая юлнă» Америкăра та, ытти ют çĕршывсенче те ăна хаваслантаракан япаласем сахал мар пулнă.

Жореса, ĕççыннисен телейĕшĕн пуçне хунă француз революционерне, асăнма Париж урамне тухнă рабочисем, Америкăри «Мы смело в бой пойдем за власть Советов» юрра хастарлăн юрлакан комсомолецсем те, совет паспортне курнипех çĕленрен хăранă пек чĕтресе ӳкекен мĕскĕн те сĕмсĕр çынсем те, - çавсем пурте В. Маяковский чĕринче савăнăçлă туйăм çуратнă. Хамăр çĕршывра чухне те В. Маяковский япăххине те, лайăххине те сахал мар курнă. Лайăха вăл «Лайăх!» («Хорошо!») поэмăра ырланă, япăха вара «Япăх» («Плохо») поэмăра сивлес шухăшпа çӳренĕ. Çавăн чухне те вăл вăхăт-вăхăт çиллес, вăхăт-вăхăт хавас пулнă. Çакна пĕлтерет те ĕнтĕ П. Хусанкай сăввинчи «пĕр çиллес çӳрерĕн, пĕр хавас» тенĕ кĕске кăна йерке, В. Маяковскин пĕтĕм чунне уçса паракан сулмаклă йĕрке. Çак йĕркери шухăша П. Хусанкай малалла та тарăнлатса пырать. Вăл çӳревçĕ-поэтăн хаваслăхĕ мĕнрен килнине те уçăмлă ăнлантарса парать: «Эсваскатрăн пирĕн вăхăта: // Çĕр çинчи пур кивĕ сăн-сăпатăн // Кичемне çулта хăрта-хăрта, // Çĕннине сăрт урлă сасă патăн».

Кунта мана А. Фадеев «Хорошо!» поэма çинчен каланă сăмахсем аса килеççĕ. Вĕсем П. Хусанкай сăввинчи «Эс васкатрăн пирĕн вăхăта» йĕркен пысăк шухăшне такам та ăнланмалла туса хураççĕ. «Хорошо!» поэмăна çырса пĕтерсен, В. Маяковский çывăх юлташĕсене хăй патне пухнă. Ун чухне вăл «Хорошо!» поэмăна вуласа панă. Унта «Разгром» авторĕ те пулнă. Çавна аса илсе, 1947 çулта А. Фадеев çапла çырать: «Я помню десятую годовщину Октябрьской революции... Маяковский пригласил небольшую группу литераторов к себе на дом, впервые читал поэму «Хорошо!». Надо сознаться, что даже мы, выходцы из демократических низов, в известной мере тоже зачинатели советской' литературы, не сразу поняли все величие и значение этой поэмы. Мы подошли к ней с узко литературной точки зрения. Нам не понравилась ее декларативность. В этой поэме перед десятой годовщиной Октября,

когда страна жила еще тяжело, когда стране было очень трудно, Маяковский говорит о ней как о стране, уже утвердившей новый строй жизни. Он говорит о своей крепкой связи с советской Родиной. Теперь, спустя двадцать лет, эта поэма звучит во весь голос, многое из того, что в ней только предвосхищено, осуществилось. Поэма «Хорошо!» поистине была пророческой».

В. Маяковский пуласлăха çывăх курса тăнă. Вăл ăна паян кунхи ĕçсемпе пит те меллĕ çыхăнтарма пĕлнĕ. Çавна, В. Маяковский çырнă сăвăсен паллă енне, П. Хусанкай тĕрĕс асăрханă.

«Вăтăр пилĕк çултан» сăвăра П. Хусанкай Маяковский телейне кăна мар, унăн пурнăçри телейсĕрлĕхне (трагедине) те питĕ лайăх уçса парать. «Сăвă хыççăн сăвă ĕлкĕртсе, // Эс хăвна «телей завочĕ» терĕн. // Телейне кашни килех кĕртсе, // Ху телейсĕр юласса пĕлмерĕн...» - тет поэт. Кунта П. Хусанкай шухăшлăхĕ сисĕнет, вырăс поэчĕн пурнăçĕ ытла та мелсĕр татăлни ăна çав тери хурлантарни курăнса тăрать. В. Маяковскипе куçкĕрет калаçни П. Хусанкайшăн асран кайми самант пулса юлнă. Унтанпа вăтăр пилĕк çул иртнĕ. «Мĕн пек çулсем! Эс курайсанччĕ!» - тет поэт. Вăл Маяковский ĕмĕтленнĕ пурнăçа хăйне курма тӳрĕ килнĕшĕн чĕререн савăнать. Хальхи чаплă пурнăçа аслă поэта курма пӳрменшĕн хурланни те кунта аван сисĕнет. Ăна П. Хусанкай сасă çекленĕвĕнче çеç палăртса хăварать, вăл та сăвăра питĕ ăнăçлă пулса тухнă.

В. Маяковскипе епле курнăçса калаçнине П. Хусанкай пире унччен те каласа панăччĕ. Вĕсем ун чухне Н. Шелепипе, чăвашсен вата поэчĕпе, пĕрле пулнă. Çĕнĕ сăвăра поэт, лирикăлла сăнарăн типлăхне ытларах палăртма тесе, Н. Шелепипе пулнине асăнмасть. Вăл чăннипе сăвăра кирлĕ те мар, мĕншĕн тесен кунта поэт, унччченхипе танлаштарсан, ытларах хăйĕн туйăмне уçса пама шутланă: ытлашши сăнар ăна чăрмантарнă, шухăша сапаласа янă пулĕччĕ.

П. Хусанкай сăмахпа перекетлĕн, меллĕн усă курни çакăнта уйрăмах палăрать. Икĕ-виçĕ йĕркепех тулли сăнар пулса тăрать: «Çил-тăманлă, куç курми каçкўлĕм // Эп хăйса шаккарăм сан патна. // Эс тăрсассăн тăвăрланчĕ пўлĕм, // Те унччен канайрăн кăшт кăна?»

«Эс тăрсассăн тăвăрланчĕ пўлĕм». В. Маяковский сăнне кăтартма тата урăх мĕнле сăмах тупма пулать-ши? «Мĕн калаçрăмăр? Эс Улăп пекчĕ, // Эпĕ - сан кĕсйўнти сухаç. // Хам вăя çапах та ĕнентерчĕ // Эс сăмах хушни мана çав каç».

Кунта П. Хусанкай халăх сăмахĕнчи улăппа сухаç сăнарĕпе епле вырăнлă усă курни çинчен ытлашши калаçса тăмасан та юрать тетĕп: сăвăри çав илемлĕхе асăрхамасăр никам та иртме пултараймасть. Эпĕ кунта П. Хусанкай В. Маяковскипе курнăçнă саманта мĕнле хакланине кăна палăртасшăн: аслă поэт сăмах хушни те çамрăк çыншăн, чунне поэзи хĕлхемĕ тивнĕскершĕн, пысăк телей шутланнă. Хăшĕ-хăшĕ, тен, П. Хусанкай каппайланать теме пăхĕç. Калаччăр, анчах та çакна асăнмасăр ниепле иртсе кайма май çук; В. Маяковский ăшă сăмахĕ чăваш поэтне кăна мар, ытти нумай-нумай çамрăксене совет литературинче пысăк вырăн йышăнма пулăшнă. Çавна П. Хусанкай питĕ сăпайлă тата пысăк ăсталăхпа кăтартать.

Унтанпа вăтăр пилĕк çул иртнĕ, терĕмĕр. П. Хусанкай асĕнче аслă поэт чĕрĕ çын пек тăрать. Халĕ ĕнтĕ чăваш поэчĕ ун умĕнче хăйне ĕлĕкхи пек именчĕк тыткаламасть, вăл та пурнăçĕнче сума сума тивĕçлĕ ĕçсем тунине систерет: «Каппаймасăр каласан - ман сассăм // Кирлĕ пек тăван халăхăма». Е тата: «Космонавтшăн сăвă - савнипе пĕр, // Ахăртне, ку пĕлтерет ырра».

П. Хусанкай çырнă «Вăтăр пилĕк çултан» сăвă В. Маяковский тăван халăхран ĕмĕр татăлмасăр пурăннине, çакă ăна телей кўнине кăтартакан хăватлă произведени пулса тăрать. Эпир унта вырăс поэчĕн телейлĕ шăпине куратпăр.

«Назым Хикмете» сăвăра вара П. Хусанкай урăх шăпана - мул тĕнчинчи поэтăн йывăр шăпине сăнласа кăтартать. Назым Хикмет - Турци поэчĕ. Темиçе çул хушши тĕрмере ларнă хыççăн вăл Совет Союзне тарса килнĕ, Тăван çĕршывĕ уншăн амаçури вырăнне пулса юлнă. Н. Хикмет совет çыннин ятне йышăннă. Çавна вăл пысăк телей вырăнне хурса пурăнатчĕ. Анчах хăйĕн асаплă Тăван çĕршывне вăл асрах усратчĕ. «Пехил» сăвăра вăл çапла каланăччĕ: «Çĕршывăм ирĕклениччеи вилсессĕн, // Эп Анатолире çĕре кĕресшĕн. // Ялти масар çине мана пытарăр: // Хăрах енче - хуçа вĕлернĕ тарçă // Османăн вилтăпри, ман тепĕр кӳршĕ - // Ыраш ани çинче ача çуратнă, // Хĕрĕхченех çĕре кĕнĕ Айша... // Ман пуçăм тĕлĕнче чинар кашлатăр, // Ан хурăр чул та, палăк та ан лартăр...» - тенĕччĕ вăл.

«Пехил» сăвва П. Хусанкай Н. Хикмет ятне çырнă сăвăра эпиграф вырăнне лартнă. В. Маяковские пилленĕ сăвăри пекех, поэт кунта та сăнара курăмлă тума тăрăшать. Турци поэчĕн сăнне (портретне) вăл, сăмахран, гранитран касса кăларнă тейĕн: «Кăвак куçлă яштака этем! // Маншăн кашни тĕлпулу - телейччĕ. // Хура тинĕс тăрă хумĕсем // Куçăнта кулса çиççе илетчĕç. // Хĕрлĕрех кăтра çӳç пайăрки // Кăнтăрти хĕвел шевли çапатчĕ. // Хĕрхенмерĕ пурăнăç йĕрки: // Тăнлаву кĕретĕн кăвакарчĕ».

Н. Хикмет кăмăлне те П. Хусанкай пĕчĕк деталь урлă кăна питĕ меллĕ уçса парать. Вăл кунта тĕрĕк чĕлхинчи «назăм» тата «хикмет» сăмахсен чăн-чăн пĕлтерĕшĕпе аван усă курать. «Назăм» - илеме, поэзие, «хикмет» - ăслăха кăтартать имĕш. П. Хусанкайшăн вара Н. Хикмет сăнарĕнче хаклăран хаклă пахалăх вăл - чун-чĕре илемĕпе хăватлă ăс. Çакă поэта кĕрешӳçĕсен ретне тăратнă, хăйĕн класĕнчен пистернĕ: «Пурăнма пулатчĕ лăпкăн та: // Эсĕ тĕрĕк халăхĕн улпучĕ. // Анчах писрĕн хăвăн класунтан, // Сан идеалу вăл - Ленин пулчĕ».

Ленин сӑнарӗ, Ленин вӗрентӗвӗ Н. Хикмета пурнӑҫра та, ӗҫре те хавхалантарнӑ.

«Назӑм Хикмета» сӑвӑ коммунизм идейисен хӑватне уҫса парать. Ҫакӑнта сӑввӑн тӗп шухӑшӗ. П. Хусанкай ӑна Хикмет сӑнарӗнче те, лирикӑлла сӑнарта та аван кӑтартать. «Сан чи ҫутӑ ӗмӗтӳ, тӗнӳ - // Пур этемлӗх пӗрлӗхӗ, тӑванлӑх. // Коммунизм - аслӑ ӗненӳ - // Ҫавӑрать пире хӑй майлӑ».

Н. Хикмет хӑйӗн Тӑван ҫӗршывӗ те пусмӑрлӑха пӗтерессе шанса тӑнӑ. Вӑл шаннӑ та, ӗненнӗ те. Вӑл пысӑк ӗмӗтпе пурӑннӑ. Вӑхӑт ҫитӗ - Хикмет ӗмӗчӗ пурнӑҫланӗ.

* * *

«Эпӗ пӗтӗм чунпа лирик» - ҫапла каланӑ Хусанкай хӑйӗн ӗҫне хакланӑ майӑн. Вӑл- пысӑк лирик пул-нине сӑввисем кӑна мар, унӑн пысӑк калӑплӑ произ-веденийӗсем те аван кӑтартаççӗ. Хусанкай темиҫе поэма ҫырнӑ. Унӑн поэмисен шутне ӗлӗкхипе хальхи чӑваш юрӑҫин шӑпине кӑтартакан икӗ япалана - «Тилли юррисем» (1933-1940) тата «Инҫе вӗҫев» (1963-1964) кӗнекесене кӗртме тивӗҫ. Вӗсем пурте Хусанкай пултарулӑхӗн паллӑ тапхӑрӗсемпе ҫыхӑннӑ этаплӑ япаласем. Кашнине вуласа-каласа тӑма вӑхӑт нумай кирлӗ. Ҫапах та хӑшне-пӗрне, сӑмахран, «Магнитту», «Таня» тата «Горкӑри ҫурт» поэмӑсене, уйрӑм асӑнмах тивет.

«Магнитту» поэмӑра Хусанкай совет халӑхӗн социализм тӑвас ӗҫри хастарлӑхне пысӑк завод тунипе ҫыхӑнтарса сӑнлать. Поэмӑна Урал сӑнне тӗпрен ҫӗнетсе улӑштарнӑ Магннтогорскри завод тӑвакан ҫынсен паттӑр ӗҫӗпе хавхаланса ҫырнӑ. М. Я. Сироткин профессор «Магнитту» поэмӑна ҫапла хаклать: «Автор шухӑшӗ тӑрӑх, ку поэма социализмла завод тӑвас ӗҫе пӗтӗм халӑх хутшӑннине сӑпласа кӑтартмалла пулнӑ. Ку чӑннипех те ҫапла. Поэмӑра тӗрлӗрен рабочисем - промышленноҫра

тахҫанах ĕҫлекенсем те, завод тăвас ĕҫе тин хутшăннă хресченсем те, хула ҫыннисем те, ҫеҫенхирсенче куҫса ҫӳрекенсем тепĕр сăмахпа каласан, тĕрлĕ социалла сийрен тухнă, тĕрлĕрен шухăш-кăмăллă халăх. Коммунистсемпе малта пыракан ăстăнлă рабочисем ертсе пынипе ҫак халăх ӳснĕҫем ӳссе пĕр пĕтĕм шухăшлă ҫирĕп коллектив пулса тăрать». Ҫапла, Хусанкай поэмăра ҫĕнĕ пурнăҫăн чăн-чăн хуҫисене сăнлать, вĕсем совет ҫĕршывĕн тĕрекĕ пулнине уҫса парать. В. И. Ленин сооциализм тапхăрĕнчи литературăна акă мĕнле хаклать: «Ку вăл ирĕклĕ литература пулĕ, мĕншĕн тесен унăн ретне ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ вăйсене ҫăткăнла пуясшăн хыпса ҫунни тата карьеризмшăн антăхни мар, социализм идейи тата ĕҫҫыннисем майлă пулни хутшăнтарса пырĕ. Ку вăл ирĕклĕ литература пулĕ, мĕншĕн тесен вăл капăр пурнăҫпа ытлашши иртĕхсе кайнă героиньăшăн мар, тунсăхласа пурăнакан, мăнтăрланса кайнипе асапланакан «ҫӳлти обществăри вунă пин» ҫыншăн мар, миллионшар, вуншар миллион ĕҫҫыннишĕн, ҫĕршывăн чи лайăх пайĕ, унăн вăйĕ, ун малашлăхĕ пулса тăракан ĕҫҫыннисемшĕн ĕҫлекен литература пулĕ». «Ҫĕршывăн чи лайăх пайĕ, унăн вăйĕ, унăн малашлăхĕ» пулса тăнă ҫынсене сăнлать те ĕнтĕ Хусанкай «Магнитту» поэмăра. Ăна вăл хăватлă туйăмпа ҫырнă, совет ҫыннин савăк чунне тарăн уҫса панă.

«Магнитту» поэма-коммунизм ҫĕршывне халалласа ҫырнă чаплă юрă.

«Таня» - Тăван ҫĕршыв аслă вăрҫипе ҫыхăннă паллă поэма. Кунта поэт совет халăхĕн патриотизмне вырăс хĕрĕ Зоя Космодемьянская сăнарĕнче кăтартать. Совет ҫыннипе нимĕҫ фашисчĕн икĕ тĕрлĕ моралĕ, таса чунпа хура юнлă ҫыннăн тытăҫăвĕ - ҫакăнтан тухса тăраҫҫĕ поэмăри ĕҫсем. Вырăс хĕрĕ паттăррăн вилет, анчах чунне нимĕҫ йыттисене сутмасть. Ҫĕнтерӳ юрри пек янăраҫҫĕ унăн юлашки сăмахĕсем, совет халăхĕн вăрҫă вăхăтĕнчи пысăк шан-чăкне уҫҫăн

сăнлакан йĕркесем: «...Вилмешкĕн эпĕ хăрамастăп, // Хам халăхшăн вилни - телей... // Сывă пулăр, юлташсем! Кĕрешĕр! // Ан манăр: парти пирĕнпе // ĕненĕр...»

Хусанкай вăрçă темипе, «Таня» поэмăсăр пуçне, тата нумай сăвă çырнă; вĕсем пурте пĕр туйăмлă сăвăсем: совет халăхне тăшман çĕнтереймĕ, тĕнче усалне вăл чăл-пар çапса аркатĕ. Вăрçă - хăрушă, пĕрлешӳллĕ халăх вăйĕ кăна этемлĕхшĕн мире сыхлама пултарĕ. Çапла кăмăлпа çырнă вăрçă çинчен чăваш поэчĕ, совет халăхĕн вăрçа хирĕçле шухăшне тӳррĕн каланă. Вăрçă тата мир - çакă Хусанкай асĕнчен хайран та тухмасть: поэт этемлĕх пуласлăхĕшĕн пăшăрханать, «вăрçă» сăмах тĕпрен пĕтессе кĕтет; «Эп куртăм тискер выçлăха, // Шаршанĕ-шаршанĕ виле...// Таçта - çĕрекен пурлăха // Шăлса ывăтатчĕç çиле. // Эп куртăм этемлĕх юнне, // Такам - тăкнăçем хĕпĕртет. // Вĕсемшĕн салтак пит йӳне // Çӳретчĕ вăл çак ĕмĕрте. // Каллех çын хура юнпалан // Кĕрсен икĕ пинмĕш çула - // Хыпса çунтăр ĕмĕтĕм ман! // Кунтах ӳпĕксе эп юлам. // Çын чунĕ хăйне хăй çĕнсен, // Харам пулмĕ, тен, эп чĕнни: // Сире эп шанатăп, çынсем, // Эп - çирĕммĕш ĕмĕр çынни!»

Çĕнĕ ĕмĕрти çынсен шанчăкĕ ялан В. И. Ленин ячĕпе çыхăннă. Хусанкай çакна пĕтĕм чунпа туйса пурăннă. «Вăрçă хыççăн вăл совет халăхĕн туслăхĕ çинчен, чăваш çĕршывĕн пуласлăхĕ çинчен, социализмла обществăри çынсен таса кăмăлĕ çинчен сăвăсем çырма шутланăччĕ. Ленин темине те çĕнĕ куçпа пăхса уçса парас пысăк ĕмĕт тытнăччĕ вăл. Владимир Ильич Ленина, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, чăваш çынни епле хытă юратнине кăтартасшăнччĕ чăваш поэчĕ. В. И. Ленин ĕççыннисемшĕн мĕнле тăрăшнине, вăл тĕрлĕ нацисен тивĕçĕпе ирĕклĕхне епле упранине лайăх сăнарласа парас шухăшпа пурăнчĕ Петĕр Хусанкай», - аса илет поэт юлташĕ.

Чăваш халăх поэчĕ хăйĕн пысăк ĕмĕтне пурнăçланса ĕлкĕрчĕ. «Аслă чĕре» (1960) тата «Горкăри çурт» (1951 - 1952) - Ленинăн çутă сăнарне

уҫса панă поэмăсем. Вĕсем, уйрăмах «Горкăри ҫурт», тĕнчипе паллă кĕнеке пулса тăчĕҫ, ҫулпуҫăн чаплă палăкĕсен шутне кĕчĕҫ. «Чĕр пурнăҫ ĕмĕрлĕх пилленĕн - // Саралмĕ чăрăш нихăҫан. // Пирĕнпеле ялан пĕр Ленин, // Эпир те Ленинпа ялан!»

* * *

Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкайăн пысăк кĕнеки вăл - «Аптраман тавраш» (1957) сăвăлла романĕ. Мари халăх поэчĕ Миклай Казаков ăна чăваш поэчĕн паттăр ĕҫĕ тесе хакланă. Тĕрĕс сăмах. Романра Хусанкай чăваш халăхĕн темиҫе ĕмĕр тăршшĕнчи пурнăҫне анлă илсе сăнласа панă тесен те йăнăш пулмĕ: тĕп ĕҫсене Тăван ҫĕршыв аслă вăрҫи вăхăчĕпе ҫыхăнтарса, чăваш поэчĕ тăван халăхăн авалхипе хальхи шăпине ҫутă сарăпа ўкерсе панă. Аптраман тавраш…Ҫапла курать поэт чăваша, ĕлĕк те, халĕ те вăл ҫирĕп те хастар пулнине сăнаса. Аптраман тавраш - ҫирĕп халăх, ăслă халăх, чăн-чăн  совет патриочĕсем. Ватă Хветĕрпе Сăпани качăк, вăталăх Иллепе арăмĕ, вĕсен хитре те патвар, паттăр та ĕҫчен ачисем - Кервен, Энтри, Натали, Павăл - поэтшăн хаклă та ыра ҫынсем. Тăван ҫĕршыва, тăван яла, тăван киле чунтан юратаҫҫĕ вĕсем. Пысăк ĕмĕте чĕрере усрать Аптраман травашĕ, ҫав ĕмĕте пурнăҫласшăн тăрăшать. Аптраман тавраш - пирĕн халăхăн пĕтĕмĕшле сăнарĕ, вăл ытарлă сăмах пулса кĕчĕ. «Эпир вăл Аптраман тавраш», - теҫҫĕ халĕ чăваш ҫыннисем.

«Ҫыран, иккĕленен, шыратăн... // Калать хурать те хăш юлташ - // Хăвна йăлт урăхла куратăн: // «Эпир вăл Аптраман тавраш...» // Илтсессĕн эп темле вăтантăм, // Анчах,  пăртак  шухăшласан, // Ҫав сăмаха ăшра пытартăм // Чи пысăк парнепе пĕр тан».

Ҫапла вĕҫленĕ Хусанкай романа: унăн халăх пурнăҫĕнчи пĕлтерĕшне аван курнă вăл.

«Аптраман тавраш» - хăйне евĕр кĕнеке. Вăл хамăр поэзири паллă произведенисене - «Нарспи», «Хĕн-хур айĕнче», «Ҫул», «Кĕлпук мучи»,

«Хамăр ялсем» поэмăсене çывăх. Халăх пурнăçĕ, унăн историнчи пллл ĕçсемпе çынсем, йăла-йĕрке, халăхăн ырă кăмăлĕпе сăнпуçри илемĕ - пурне те тупатăн кунта. Тăван тавралăх, аслă Атăл, вăрмансем, улăх-çаран, йывăç-курăк - çаксене те манса хăварман поэт. Кашни сăвăра чăваш чунĕ, чăваш сăнĕ курăнать.

Петĕр Хусанкай пурнăçĕпе ĕçĕ çинчен сăмах пуçарнă май, поэтăн пĕтĕм пурнăçĕ унăн ĕçĕнче курăнать, терĕмĕр. «Аптраман тавраш» роман çак сăма-хăн тĕрĕслĕхне уйрăмах лайăх уçса парать. Поэт-историк, поэт-шухăшлавçă, совет çынни, тăван халăх ывăлĕ - çапла тухса тăрать «Аптраман тавраш» романра Петĕр Хусанкай. Вăл хăйне ниçта та халăхран уйăрмасть, халăх савăнăçне, халăх хуйхине пĕрле чăтса пурăнать: ĕçе кӳлĕнет, тара ӳксе ĕçлет, вăрçа кĕрет - паттăррăн çапăçать. Коммунистăн чыслă ячĕпе хисеплĕ вăл. Романра коммунистсене халалланă сăвăсем - хăйсем уйрăм чаплă юрă. «Çапăçса ыран вилсен, // Коммунист тесе хисеплĕр... Ку - Аптраман таврашĕн сăмахĕ. Вăл Петĕр Хусанкая хăйне те питĕ тивĕçлĕ. Поэт «Çĕнтерӳ юрри» сăвăра хăйĕнчен те çавна каланă: «...Çапăçса ыран вилсен, // Коммунист тесе хисеплĕр...» // Ак çапла салтак кĕскен // Тăрмалать кĕрхи сивлек çĕр. // Ак çаплах эп те иккен // Çыртăм, нимĕн тĕлĕнмесĕр, // Эп - чĕлхе лаççи, анчах // Тупаймарăм тек сăмах».

1977 çулта Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 70 çул тултарчĕ. Вăл çĕре кĕнĕ ĕнтĕ. Кун иртет, çул иртет, - унăн коммунист чунĕпе çырнă сăввисен хăвачĕ чакма мар, вăхăт шунăçемĕн ӳссе пырать. Унăн пĕтĕм пултарулăхĕ - чăваш пурнăçĕн кĕнеки, коммунист кĕнеки. Поэт - тăван халăхăн чысĕпе чапĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вăл çуралнă кун - чăваш халăхĕшĕн пысăк уяв.

* * *

Петĕр Хусанкай - телейлĕ çын. Вăл хăйĕн çутă тĕнчери парăмне татса кайрĕ, - чăваш халăх асĕнче ĕмĕре юлчĕ. Поэт сăнĕ тĕп хула варринче ларать, вăл палăк катаран курăнать. Унăн ячĕ пысăк керменпе аслă урама илем парать. Пин-пин сăвви халăхра упранать, таçта-таçта уççăн янăрать.

«Нумай çĕре çитсе паратăп сасă, // Çыратăп, калаçатăп вырăсла. // Сасартăк Атăл çилĕ касă-касă // Чуна килсе тивет те - пыр, ăсла! // Кăмăлăма вăл вăрăнса кĕрсессĕн, // Пыр, туп вара эс ун кутне-пуçне! // Кӳтсе çӳрен, лара-тăра пĕлместĕн, // Чĕнми пулан, пăхмастăн çын çине... //

Хистет çав çил: пĕр ӳкĕтлет йăвашшăн, // Пĕр вăл, лăскать, чуна хайăрттарса, // Умра кунçулĕ тĕрленет чăвашăн - // Асаплă та ытарайми таса.

Вара эс парăмлă тесе шутлатăн // Иртнишĕн те, хальхишĕн те хăвна, // Çĕршыв çулне, тĕнче çулне хутлатăн // Пĕртен-пĕр ырă ĕмĕтпе кăна: //

Тăван йăха тата кăшт хăпартасчĕ, // Ку тарана çитернĕ чĕлхене // Мĕнпур илемĕпе халь кăтартасчĕ, // Мĕнпур хăвачĕпе çак тĕнчене. //

Хăçан, ăçта куç хупассине курмастăн: // Таçти Европăра е Азире... // Пĕр-пĕр палла эп тивĕçлĕ пулсассăн - // Чăваш сăмахĕ пултăр ман çире».

Чăваш халăхĕ Петĕр Хусанкайăн çак ĕмĕтне тултарнă - поэт тăпри çинче тăван сăмах, чăваш сăмахĕ, çиçсе тарать: чул çине çырнă - ĕмĕре пырать.

Петĕр Хусанкайăн чăваш поэзинчи пысăк ĕçĕ халĕ такама та паллă. Ăна совет поэзинче хытă хисеплеççĕ. «Тăван халăхăн иртнĕ, хальхи тата пулас пурнăçĕ çинчен тарăн шутлакан поэт», - тенĕ ăна вырăс поэчĕ Сергей Смирнов. «Петĕр сăввисенче мана пурнăça темрен ытла юратни, тĕнче çине çынна тĕлĕнтерсе савăнăçлăн пăхни уйрăмах килĕшет. Унăн поэзийĕ хăй евĕр, çавăнпа пĕрлех, питĕ наци палăрăмлă, вăл тĕнче

культурипе нумай пуянланнă... Вăл ансат, анчах тарăн вăл, - тесе çырнă паллă совет критикĕ Ли-дия Фоменко. Петĕр Хусанкая тата унăн пултарулăхне Совет Союзĕнчи нумай халăх çынни - поэчĕ ырăпа асăнать. Латви халăх поэчĕ Ян Судрабкалн çапла каланă: «Эпĕ Сире нихçан та курман, анчах Эсир мана питĕ çывăх; Сирĕн çинчен эпĕ чылай пĕлетĕп, мĕн пĕлни вара пĕтĕмпе - лайăх, аван. Эсир, халăх поэчĕ, хăвăр тăван республикăшăн, ырă Чăваш çĕрĕшĕн нумай вăй хуратăр, пĕтĕм Совет Союзĕшĕн те, апла пулсан, пĕтĕм тĕнчешĕн те». «Мĕнле лайăх пурăнма пире тăван йышра, кунта кашнин туссем йышлă. Пĕтĕм çĕршыва çупăрласа ыталăттăм, чăваш тăванăмсене те, Сире илемлĕ сăввусемшĕн тав тăвăттăм». «Сирĕн сăвă кĕнеки нумай япала çинчен шухăшлаттарать. Совет халăхĕн аслă туслăхĕ, вăл халăхсен тĕлĕнтермĕш шăпи, вĕсем пĕрне-пĕри çывăх курма тăрăшни тата вырăс чĕлхине пула эпир пĕр-пĕрне аван ăнланма пултарни - çаксем пурте пуçа çавăраççĕ».

«Эпĕ сана ялан асра усратăп, эсĕ маншăн пысăк культурăллă писательсенчен пĕри, ăслă та такамран çывăх тусăм,— тесе савăннă Кайсын Кулиев.

«Чăваш поэзинче Эсир мĕн тери пысăк ĕç тунă. Хакĕ çук-тăр унăн, тусăм! «Аптраман тавраш» мана питĕ савăнтарчĕ. Вăл - ăсталăхлă, кĕвĕçтерӳллĕ, пăлхантаруллă япала. Ман шутпа, Сирĕн роман - сăвă ĕçĕнчи хăйне евĕр паттăр ĕçĕ», - тенĕ мари халăх поэчĕ Миклай Казаков «Аптраман тавраш» роман пирки.

Паттăр ĕçĕ! Пирĕн те çаплах калас килет чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн ĕçне-хĕлне хакланă чух. Вăл - чăваш поэзийĕн Улăпĕ. Вăл - тăван халăх сăвăçи, сумлă, ятлă совет поэчĕ. Сăмах ăсти вăл, чăваш чĕлхин чапĕ.